# «ТУРКАЙ ТА ТĔРЛĔРЕН ПУРНАТЬ...»



**Тĕлĕнсе пĕтерейместĕн çак çынран! Вăл Чăваш халăх поэчĕ те, ЧР Профессиллĕ писательсен союзĕн председателĕ те, "Çеçпĕл" фончĕн ертӳçи те... Пĕрмай таçтаваскать, пĕрмай чăвашлăхшăн хыпса çунать Валери Туркай. Лайăххине мухтать, япăххине тӳртен калать. Кирек мĕнле ĕçе пуçăнсан та Валерий Владимирович ăна тĕплĕ те чунтан пурнăçлать. "Çеçпĕл кăвайчĕ" фестивале хутшăнакансем, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премие пама пуçланăранпа 40 çул çитнине халалланă уяв касĕнче пулнисем суйма памĕç.**

**– Чим-ха, çĕнĕ сăвă вуласа парам-ха, – терĕ вăл пӳлĕме кĕрсен.**

***– Анаткасра ача çуралнă.***
***Кĕрлет-шавлать телейлĕ Анаткас!***
***Ăçтан, епле хавасланмасăр чăтăн –***
***Ача сасси халь янрамасть час-час!***

**– Тĕлĕнмелле, пĕр кунра 5 сăвă çыртăм, – пĕлтерчĕ В. Туркай.**

**Мĕн пулнă вара вăл кун? Сăвă мĕнле çырăнать? Çак ыйтусенчен пуçларăмăр эпир калаçăва.**

– Мĕншĕн çырăнать, мĕншĕн çырăнмасть – калама çук пысăк вăрттăнлăх. Ун чухне – январĕн 28-мĕшĕнче, вырсарни кун – ирех темле хум ярса илчĕ те мĕн касчен вĕçертмерĕ. Сăвă çуралнă чух выртса та çыратăн, ларса та. Ман юлташ пур – Петр Васильевич Ивантаев, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премии лауреачĕ. Çырса пĕтеретĕп те – эп алăпа, ручкăпа шăрçалатăп – ăна вуласа паратăп. "Вăйлă! Лайăх!" – тет.

Çапла 4 сăвă хыççăн ывăнса çитрĕм. Уçăлма тухсан та лăпланаймастăп вĕт! Тахçанах, пĕр 3 çул каялла, сăвă йĕркисем тĕвĕленнĕччĕ: "Анаткасра ача çуралнă..." 2-3 хутчен те малалла çырма хăтлансан пăхнă – çук, каймасть. Ак кунта, хула урамĕпе уçăлса çӳренĕ чух, иккĕмĕш йĕрке çуралчĕ, виççĕмĕш, тăваттăмĕш... Киле çитсен пĕр 5-10 минут хушшинче хут çине куçартăм та.

**– Эппин, сирĕн сăввăрсене чи малтан хак паракан̆ĕ Петр Васильевич?**

– Вăл кăна мар. Ытларах – мăшăр Оля. Хăш чухне Аристарх Дмитриев, Юрий Сементер, Арçук Тарасов... – кама шанатăп, кам чăнах та вăйлă тет.

**– Вĕсем, мĕн, пачах критиклемеççĕ-им?**

– Критиклеççĕ паллах! "Кунта тем çитмест, пиçсе çитеймен, чĕрĕрех", – теççĕ. Шута илетĕп, тав тăватăп. Пĕлетĕп, вĕсем лайăххине – лайăх, начаррине начар теççĕ.

***– "Çулсем иртнĕçем***
***ытларах эп***
***Саватăп...***
***хам мăшăрăма", –*** **тенĕ эсир пĕр сăввăрта. "Таса Пирĕштипе" ăнсăртран тĕл пулнăшăн Турра тав тунă. Мăшăрпа чăнах та ăнсăртран паллашнă-и?**

– Ку вăл хăй пĕр калав. Эп ун чух И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче III курсра вĕренеттĕм. 1980 çулхи кĕркунне, юпа уйăхĕ. 6-мĕш общежити умĕнче пĕр ушкăн чăваш хĕрĕ тăрать. Тӳрех паллă – I курс. Пĕр хĕр ачана курах кайрăм. Илĕртӳллĕ, хӳхĕм кĕлеткке, кролик çĕлĕкĕ айĕнчен курăнакан сап-сарă çӳç... Çав самантрах ăнлантăм: ку – ман! Сăнне, кăвак куçĕсене курсан нимĕнле иккĕленӳ те юлмарĕ.

**– Ун хыççăн мĕн чухлĕ чупрăр?**

– Юратупа çиçекен ман куçсене курсан Оля аптăраса ӳкнĕ. Эпĕ вара ун пирки кăна шутлаттăм. Вара пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ман енне çаврăнчĕ. Икĕ çултан, 1982 çулхи авăнăн 14-мĕшĕнче, пĕрлешрĕмĕр.

**Пур çыннăн та пурнăçра виçĕ ĕç тума пĕлмелле: каçару ыйтма, кăçарма тата тав тума.**

**– Халĕ сирĕн икĕ хĕр пĕрчи ӳсет...**

– Илемпи тата Силпи. Асли пĕлтĕр педуниверситетăн ӳнерпе графика факультетне хĕрлĕ дипломпа вĕренсе пĕтерчĕ, халĕ унтах декан çумĕ пулса ĕçлет. Кĕçĕнни шкулта 11 класра вĕренет.

**– Ачăрсене чăвашла ят пани те ăнсăртран мартăр...**

– Паллах! Ача чух офицер пулас килетчĕ. Львоври аслă çар училищине каясшăнччĕ. Районта комисси витĕр тухрăм, Шупашкарта вара чĕрере шав тесе кăлармарĕç. Офицер пулас тĕллев çапла пăчланчĕ. Çакăн хыççăн пурнăç çулне суйласа илтĕм: чăваш чĕлхи, чăвашлăх. Малтан çакă ачапчалла пулнă пулсан, вĕренме кĕрсен, Виталий Станьялпа, Арçук Тарасовпа, Иосиф Дмитриевпа паллашнă хыççăн нимĕнле иккĕленӳ те пулман: пĕтĕм пурнăçа тăван халăхăма халаллатăп. Эппин, ман пур енĕпе те чăваш пулмалла. Çав шутра, ачасен ячĕ те – чăвашла.

**– Эсир артиста та вĕренме кĕресшĕн пулнине илтнĕччĕ...**

– Пулнă ун пекки /*кулать*/. I курсра университетра питĕ кичемччĕ, пĕлекен япаласенех тепĕр хут вĕрен-

тетчĕç. Мускаври Щепкин ячĕллĕ театр училищине çамрăксем пухаççĕ тенине илтрĕм те хама тĕрĕслесе пăхас килчĕ. Александр Кăлканăн юптарăвне вуланине, купăс каланине ас тăватăп. Ырларĕç, мухтарĕç. "Артист пурнăçĕ питĕ хăйне евĕрлĕ, историпе филологи факультетне пăрахса кайнăшăн кайран ӳкĕнме пултаратăн", – терĕç. Çапла артист пулаймарăм.

**– Театр училищине кĕнĕ тĕк Туркай мĕнлерех артист пулатчĕ-ши?**

– Шутламан кун пирки. Тен, литературăна юратни çĕнтеретчĕ те, пурнăçа драматургие халаллатăм? Тен, режиссурăна? Артист кăна пулса пĕтейместĕмччĕ. Эпĕ гороскоппа Сурăх, пăхăнма юратмастăп. Ман хамăн ертӳçĕ пулмалла. Артистăн вара режиссера итлеме тивет.

**– Валерий Владимирович, эсир ачапча çырнă айван сăвва та классика хайлавĕ пек вулама пултаратăр. Ăçтан çакăн пек ăсталăх?**

– Çакăншăн аннене тав тумалла. Вăл питĕ пултаруллă хĕрарăм: юрлама ăста, литературăна юрататъ. 84-ра пулин те, килти пĕтĕм кĕнекене вуласа тухнă. Эпир унпа иккĕн кăна пурăннă /аттен урăх çемье/. Ас тăватăп, анне мана, пĕчĕкскере, юнашар лартатчĕ те Çемен Элкерĕн "Хĕн-хур айĕнче" поэми сыпăкне пăхмасăр вĕрентетчĕ:

*Хура хурал пӳрчĕ,*
*ăш-чикĕ кичем,*
*Тарпа, сĕрĕмпе*
*сăрланнă стена...*

Ун чух космонавтсем хисепреччĕ. Такам мана вĕсен ячĕсене калама вĕрентнĕ: Юрий Гагарин! Герман Титов! Андриян Николаев! Павел Попович!.. Тĕрĕссипе, эпĕ, 3-4 çулсенчи ача, вĕсем камсем пулнине ăнлансах та кайман ĕнтĕ. Колхоз уй-хирне тухсан çак ятсене хыттăн та уççăн калаттăм. Ун чух анне мана никампа та хăварайманран пĕрле илетчĕ: эп вара е шыв турттаракан лав çинче çӳреттĕм, е ана пусĕнче ларааттăм.

4 тата 6 классем хыççăн кĕтӳ кĕтнĕ. Хирте, икĕ кĕтӳçпе 120 ĕне тата эсĕ. Хăть те мĕн калаç, никам та илтмест. Каллех хайне евĕр шкул.

**– Валерий Владимирович, эсир Чăваш халăх поэчĕ те, республикăри Профессиллĕ писательсен союзĕн председателĕ те, "Çеçпĕл" фончĕн ертӳçи те... Хăвăра ытларах пултарулăх çынни е общество деятелĕ пек туятăр?**

– Тĕрĕссипе, ман пултарулăх ĕçĕпе çеç ларас килет. Пуçланă романа вĕçлес килет. Пьесăсем çырас килет. Халăх ĕçĕпе ĕçлесси – ачаран пыракан йăла. Шкулта политинформатор, отряд совечĕн председателĕ, хаçат редакторĕ, концерт ертсе пыракан пулнă. Студент чухне "Çилçунат" пĕрлешĕвĕн ертӳçинче тăрăшнă, "Мерчен" ансамбле, ташă ушкăнне çӳренĕ. Пĕр вăхăт 7 обществăлла ĕçе кӳлĕннĕччĕ. Стипендисĕр тăрса юлсан пăрахрăм вара.

**– Мĕн хĕтĕртсе, вăй парса тăрать?**

– Уççăнах калатăп – тăван халăха чун-чĕререн юратни, уншăн ырă ĕç тăвас тени. Студент чухнех пĕр сăвăра çапла çырнăччĕ: *"Юлашки юн тумламĕччен Санпа эп пулăп, халăхăм..."*

**– Пуш уйăхĕ, çурхи уяв, çурхи кăмăл-туйăм. Килти пикесене мĕнле саламлатăр?**

– Маншăн пурнăç – хăй пĕр уяв. Илемпи пушăн 8-мĕшĕнче çуралнă, çавăнпа пĕр уявран икĕ уяв тума тивет. Чечексемсĕр, парнесĕр мар, паллах. Чи пахи – пĕр-пĕрне юратни, пĕр-пĕрне ăнланни, пĕр-пĕрне ырă сунни. Пур çыннăн та пурнăçра виçĕ ĕç тума пĕлмелле: каçару ыйтма, каçарма тата тав тума. Питĕ ансат пек, анчах тĕрĕссипе çакă – чи йывăрри.

**Софья АНДРЕЕВА калаçнă.**

"Саманта – ялан лайăх!
Юратса, хавхаланса –
Валери Туркай
2007 ç., февраль.

## АНАТКАСРА

*Олег Мустаева*

Анаткасра паян ача çуралнă.
Кĕрлет-шавлать телейлĕ
Анаткас!
Ăçтан, епле хавасланмасăр
чăтăн –
Ача сасси халь янрамасть
час-час!

Анаткасра паян ача çуралнă.
Çуралнă ывăл –
кĕтнине кура.
Кăкăр сĕтне ĕмет те
ывăнмасăр,
Кулса кăна выртать тет
сăпкара.

Анаткаса вăл, тен,
чапа кăларĕ...
Тен, Кăйкăр пек çĕкленĕ
тӳпене...
Ăçтан пĕлен, тен,
генерал вăл пулĕ...
Тен, çĕр çинчех вăл тупĕ
Телейне...

Анаткасран тухманччĕ паллă
сăвăç.
Ăсчах тавраш та халиччен
пулман...
Ку вăл тем мар. Йăлт пулĕ,
пурте пулĕ –
Тĕнчи тӳлек те тăнăçлă
тăрсан.

Йăлт пулĕ!..
Эп шанатăп – пулĕ,
Анаткаса ыран е тепĕр кун
Ача сасси телей
парнелесессĕн,
Анаткаса килсессĕн
Çĕнĕ Чун!

## ТĔРЛĔРЕН

Чĕре те тĕрлĕрен тапать.
Хăш чух мăнаçлă вăл.
Хăш чух
Унран йăвашраххи те çук.
Чĕре те тĕрлĕрен тапать.

Кăвайт та тĕрлĕрен çунать.
Хăш чух хăватлă вăл.
Хăш чух
Унран халсăрраххи те çук.
Кăвайт та тĕрлĕрен çунать.

Хĕвел те тĕрлĕрен çиçет.
Хăш чух хаваслă вăл.
Хăш чух
Унран кичемреххи те çук.
Хĕвел те тĕрлĕрен çиçет.

Туркай та тĕрлĕрен
пурнать.
Хăш чух телейлĕ вăл.
Хăш чух...
Туркай та тĕрлĕрен
пурăнать.

* * *

Кун пек юрату та
пулать-шим?
Кун пек пулать-шим
савма?..
Çулсем иртнĕçем
ытларах эп
Саватăп... хам мăшăрăма.

Çулсем иртнĕçем
ытларах эп
Турра тав тăватăп –
тахçан
Санпа, ман
Таса Пирĕштийĕм,
Тĕл пулнăшăн эп
ăнсăртран.

Эп халь ĕненетĕп, пĕлетĕп:
Телей вăл –
ялан юнашар.
Ăна курма çеç
пĕлмелле-мĕн,
Ăна шырама кирлĕ мар.

Çулсем иртнĕçем
ытларах эп
Саватăп хам мăшăрăма.
Кун пек юрату та
пулать-ши,
Кун пек пулать-ши савма?

* * *

Пĕрисем шутлаççĕ-тĕр
тепĕр чух:
"Çав Туркайăн пурнăçĕ –
пыл та çу".
Пыл та çу –
ман пурнăçăм,
пыл та çу.
Ма тесен манран пуян
çын та çук.

Ирхине хĕвел пăхать
кантăкран –
эп – телейлĕ, эп – хавас,
эп – пуян.
Арăм ăшшăн тинкерет
куçăмран –
пур-ши пысăкрах телей
çакăнтан?

Тин çеç тунă сăрипе
хăналать
ман аннеçĕм пĕртен-пĕр
ывăлне –
эп – телейлĕ, манăн чун
савăнать.
Тав тăватăп пуç тайса
аннене.

Икĕ хĕрĕм манăн –
ик чиперук.
"Ĕмĕр пурăнсам, атте!" -
теççĕ те –
çук ман пек телейлĕ çын,
урăх çук.
Ман телейĕм перĕнет
пĕлĕте.

Тăван халăха чунтан
юратса,
шеллемесĕр вăй-хала
ĕçлесен –
эп - телейлĕ.
Эп пурăнатăп
шанса
манăн çăлтăр ĕмĕрех
çиçессе.

Пĕрисем шутлаççĕ-тĕр
тепĕр чух:
"Çав Туркайăн пурнăçĕ –
пыл та çу.
Пыл та çу –
ман пурнăçăм,
пыл та çу.
Ма тесен манран пуян
çын та çук.